27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 ИЮНЬ 24 ШАМАТКУН 124(6619) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Йышлӑ та тухӑҫлӑ выльӑх-чӗрлӗхшӗн

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XIX-мӗш пленумӗ, колхозсенчи общественнӑй выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси [illegible] тата ӑна малалла ӳстересси ыйтӑвне сӳтсе-явса, партипе совет организацийӗсем тата ҫӗрӗҫ органӗсем колхозсем умне ҫывӑх вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртмелли пысӑк задачӑсем лартрӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес государство планне тултарас тӗлӗшпе республикӑри колхозсем [illegible]. Нумай районсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне тултарса пымаҫҫӗ.

[illegible]

Выльӑхсен йышӗ, вӗсем вилнӗ пирки кӑна мар, [illegible] чакрӗ.

[illegible] Шупашкар, Сӗнтӗр тата Етӗрне районӗсенче те выльӑхсен йышӗ чакнӑ, вӗсем ҫак вӑхӑта ҫитсе те государство планне нихӑш выльӑх енӗпе те тултарман.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ ҫакӑн пек чӑтма ҫук япӑх пырать пулсан та, ВКП(б) райкомӗсемпе райисполкомӗсем тата ҫӗрӗҫ органӗсем выльӑхсен шутне ӳстерес тӗлӗшпе кирлӗ пек ӗҫлемеҫҫӗ-ха. Чуптару кампанийӗ начар пырать, июнӗн 1-мӗшӗ тӗлне кӗрпесене чуптармалли плана 42 процент, ӗнесене чуптармалли плана 19,6 процент кӑна тултарнӑ. Фермӑсем валли выльӑхсем сутӑн илес тата контрактаци ӗҫӗ тӗлӗшпе, Ҫӗрпӳпе Калинино районӗсемсӗр пуҫне, ытти районсем нимӗн те тумаҫҫӗ.

Уйрӑмӑнах колхозсенче лашасем ӗрчетес ӗҫ начар пырать. Лашасем валли ситенлӗклӗ апат хатӗрлеменни, лашасене пӑхас тата вӗсемпе усӑ курас ӗҫри обезличкӑна пӗтерменни, лашасем ҫине чунсӑррӑн пӑхни вӗсен шутне палӑрмаллах чакарчӗ.

Ҫакӑн пек чӑтма ҫук япӑх ӗҫсем ВКП(б) райкомӗсемпе райисполкомӗсем тата ҫӗрӗҫ органӗсем СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗн «Колхозсемпе совхозсенчи лашасен йышне ӳстермелли тата вӗсене пӑхассипе вӗсемпе усӑ курассине лайӑхлатмалли мероприятисем ҫинчен» йышӑннӑ постановленине кирлӗ пек пурнӑҫласа пыманнинчен килеҫҫӗ.

ВКП(б) Обкомӗн пленумӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе йӗркелесе ямалли, ку енӗпе государство планне пурнӑҫламалли практикӑллӑ мероприятисем палӑртса хӑварчӗ. Вырӑнти партипе комсомол организацийӗсене, ҫӗрӗҫ органӗсене, ялхуҫалӑх специалисчӗсене, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе ӗҫлекен работниксене пурне те выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерпӗ ҫӗре мобилизацилемелле. Выльӑхсем вилессине татӑклӑнах пӗтерсе, вӗсен йышӗпе продуктивноҫне ӳстерессишӗн ҫине тӑрса кӗрешмелле.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана тултарман колхозсене выльӑхсене сутма, какайлӑх пусма чармалла. Колхоз выльӑхӗсене салатса пӗтерекенсене суда парса ответ тытттармалла.

Ама выльӑхсене чуптармалли плана кашни колхозрах тултармалла, пӗр выльӑх та хӗсӗр юмалла мар. Иртерех ҫӑварланӑ сысна амисене, иртерех пӑруланӑ сурӑхсене июньпе июль уйӑхӗсенче тепӗр хут чуптарса хӑварма тӑрӑшмалла. Ама выльӑхсене сутассине е какай тума ярассине пачах чармалла.

[illegible] питех те ситенлӗксӗр пынине уйрӑмӑнах палӑртрӗ. Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, райисполкомсемпе ВКП(б) райкомӗсене тата ҫӗрӗҫ органӗсен руководителӗсене колхозсенче кайӑк-кӗшӗк, хурт-хӑмӑр тата кроликсем ӗрчетмелли плана пурнӑҫа кӗртмелле тума хушрӗ.

Парти Обкомӗн пленумӗ утӑ ҫулса пуҫас, силос хывас ӗҫсене кӑҫал уйрӑмӑнах организованно ирттерме хушса хӑварчӗ, иртнӗ ҫулхи йӑнӑшсене тумалла марри ҫинчен асӑрхаттарчӗ. Иртнӗ ҫул утӑ ҫулса пухасси ытла та вӑраха тӑсӑлнӑ тата уйрӑм колхозсем пӗтӗмпех пухса илеймен, ҫавӑн пирки выльӑхсем валли ҫителӗклӗ апат пулмарӗ, вӗсем вара ырханланса вайсӑрланчӗҫ.

Утӑ ҫулас ӗҫе ӑнӑҫлӑ ирттерес тесе, тырӑсене пӑхса тӑракан тата ҫӗртме тунӑ ҫӗрте ӗҫлекен колхозниксемсӗр пуҫне, ӗҫе юрӑхлӑ колхозниксене пурне те утӑ ҫулнӑ ҫӗре явӑҫтармалла.

Государствӑна обязательство тӑрӑх утӑ парса татсан, колхозри выльӑхсем валли ҫителӗклӗ утӑ хатӗрленӗ хыҫҫӑн колхозниксене ҫаран уйӑрса пама юрать; ҫавӑн пекех тата ҫул хӗрринчи, пушӑ вырӑнти ҫӗрсем ҫинчи куракӑсене ҫулма колхозниксене, чӑн малтанах вӑрҫӑ инвалидӗсемпе ҫар ҫыннисен ҫемйисене, ирӗк памалла.

ВКП(б) Обкомӗн пленумӗ уйрӑм хуҫалӑхсем государствӑна аш-какай парасси юлса пынине, ҫавӑн пекех тата колхозсем, уйрӑм хуҫалӑхсем, ялсенче пурӑнакан рабочисемпе служащисем сӗт-ҫу, ҫӑмарта тата выльӑх-чӗрлӗхӗн ытти продукчӗсене парасси ҫителӗксӗр пынине палӑртрӗ; массӑллӑ-ӑнлантарулла ӗҫе туса пынипе пӗрлех, законпа пӑхнӑ мерӑсене йышӑнса, ҫак ӗҫе вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртме хушрӗ.

Колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗх пӑхакан кадрсемпе ҫителӗксӗр ӗҫлени, вӗсене суйласа илсе ӗҫе ҫирӗплетменни пачах тӗрӗс мар. Конюхсене, ферма заведующийӗсене, ветсанитарсене улӑштарма е урӑх ӗҫе яма чармалла. ВКП(б) райкомӗсен выльӑх-чӗрлӗх ӗҫӗнчи кадрсемпе ӗҫлессине лайӑхлатмалла, вӗсене ҫак ӗҫсенчех ҫирӗплетсе, государствӑн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли планне тултарас ӗҫе мобилизацилемелле. Выльӑх-чӗрлӗх ӗҫӗнче малта пыракансемпе ялхуҫалӑх специалисчӗсен канашлӑвӗсене туса ирттермелле, паха опытсене анлӑн сармалла.

ВКП(б) райкомӗсен, партипе комсомолӑн пуҫламӑш организацийӗсен государствӑн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли планне тултарассишӗн, выльӑхсен йышӗпе продуктивноҫне ӳстерессишӗн, Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илессишӗн районсем, колхозсем, ферма работникӗсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн анлӑ хумне хускатса ямалла.

Выльӑх апачӗ хатӗрлеҫҫӗ

МУРКАШ, июнӗн 20-мӗшӗ. (Телефонпа). Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ «Выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫармалӑх апат тата ҫуртйӗр хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановленине кашни колхозрах сӳтсе-явса, конкретлӑ ӗҫсем тӑваҫҫӗ. Районӗпе ферма ҫумӗнчи участоксем ҫине 231 гектар акса хӑварнӑ.

Халӗ колхозсенче хӑй тӗллӗн ӳсекен курӑксене пухса выльӑх апачӗ валли хатӗрлеҫҫӗ. Районӗпе 274 центнер вӗлтрен, 180 центнер армути пухса типӗтнӗ, ҫавӑн пекех йывӑҫ турачӗсене касса хатӗрлес ӗҫ те ӑнӑҫлӑн пырать.

Уйрӑм колхозсем утӑ ҫулма тытӑнчӗҫ. Панкли ялсоветӗнчи «Зерно» колхоз 11 гектар утӑ ҫулнӑ. 4 гектар ҫинчи ҫамрӑк курӑка ҫулса витаминлӑ апат валли хатӗрленӗ. Ҫак кунсенчех ҫарансене талккишӗпех ҫулма тытӑнаҫҫӗ.

Муркашри «Авангард» колхоз 12 гектар улӑха ҫулса 180 центнер витаминлӑ утӑ хатӗрленӗ. Силос тӑвас ӗҫ те сарӑлса пырать. Пашалукассинчи «1-ое Мая» колхоз 48 тонна, «Пионер» колхоз 16 тонна, «Ударник» колхоз 20 тонна, «Красное Сормово», «Красная Чувашия», «Восток» колхозсем кашниех 10-шар тонна силос хывнӑ.

Районра уйрӑмах Атапайри Свердлов ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Т. Налимов юлташ) малта пырать. Ҫак колхоз тырӑсене ҫумкурӑксенчен пӗтӗмпех тасатнӑ. Ҫӗртме пуссине 5.000 лав тислӗк тӑкнӑ. Паян-ыран ҫӗртме туса пӗтерет. 40 тонна силос хывнӑ. Утӑ ҫулма шур енӗпе те хатӗрленсе ҫитнӗ.

Т. ИВАНОВ.

Чӑваш республикин столицине лайӑхлатса илемлетер

Пир-авӑр фабрикин коллективӗ Шупашкар хулинчи мӗнпур рабочисене, работницӑсене, служащисене, вӗренекенсене тата килхуҫи хӗрарӑмӗсене ЧӖНСЕ КАЛАНИ

Совет Союзӗнчи темиҫе ҫӗр пин ӗҫҫынни хӑйсен хулисемпе рабочи поселокӗсене лайӑхлатса илемлетеҫҫӗ—тасатаҫҫӗ, йӗркелесе кӗртеҫҫӗ, сулсемпе кӗпересене юсаҫҫӗ. Тӑван хулашӑн тимлӗн тӑрӑшас тӗлӗшпе мухтавлӑ Ленинград хулинчи ӗҫҫыннисем пархатарлӑ пример кӑтартрӗҫ тата халӗ те кӑтартаҫҫӗ. Хӑйсен хулисене лайӑхлатса илемлетес ӗҫе Горький хулинчи тата ҫӗршыври культурӑпа промышленноҫӑн ытти нумай центрӗсенчи ӗҫҫыннисем активлӑн хутшӑнаҫҫӗ.

Орденлӑ Чӑваш республики чаплӑ куна — Чӑваш республикине тунӑранпа 25 ҫул тултарнӑ куна—кӗтсе илме хатӗрленет. Ҫав кун тӗлне пирӗн хамӑрӑн тӑван республикӑн столицине культурӑллӑ та илемлӗ хула туса хумалла. Хулана юсаса илемлетес ӗҫре хулари мӗнпур ҫынсем хутшӑнма пултараҫҫӗ, хутшӑнмалла та.

Эпир, Шупашкарти пир-авӑр фабрикинчи рабочисем, инженерла-техникла работниксем тата служащисем, хулана лайӑхлатса илемлетес тӗлӗшпе июнӗн 25-мӗшӗнчен пуҫласа июлӗн 25-мӗшне ҫитиччен уйӑхлӑх ирттерме йышӑнтӑмӑр. Ҫав уйӑхлӑхра ҫакӑн пек ӗҫсем тума пулатпӑр:

1. 500 метр тӑршшӗ газонсем тӑватпӑр.
2. Ленинград урамӗнче 350 метр тӑршшӗ тротуар хыватпӑр.
3. Хамӑрӑн транспортпа 30 кубометр йывӑҫ материалӗсем турттарса паратпӑр.
4. Фабрикӑри общежитие юсаса ӑшӑтатпӑр тата ӑна культурӑллӑ тӑватпӑр.
5. Пир-авӑр тӗртекен 2-мӗш фабрикӑн территорийӗ таврара карта тытса ҫавӑрӑнатпӑр.
6. Фабрика килкартинче йӗркелӗх туса хуратпӑр, малашне ӑна сӳп-ҫапсенчен тасатса тӑратпӑр.

Ҫак мероприятисене пӗтӗмпех июлӗн 25-мӗшӗ тӗлне пурнӑҫа кӗртме пулатпӑр. Унсӑр пуҫне тата эпир кӗркунне фабрика тавра Ленинград, Карл Маркс тата Володарский урамӗсем тӑрӑх йывӑҫсем лартса хӑварма йышӑнтӑмӑр.

Шупашкар хулинчи мӗнпур рабочисене, служащисене, вӗренекенсене, килхуҫи хӗрарӑмӗсене хулана лайӑхлатса илемлетес тӗлӗшпе ирттерекен уйӑхлӑха хутшӑнма чӗнетпӗр.

Чӑваш республикин столицине илемлӗ та культурӑллӑ хула туса хурар!

Пурте хулана лайӑхлатса илемлетес ӗҫе хутшӑнар!

Шупашкарти пир-авӑр фабрикин коллективӗн пӗрлешӳллӗ пухӑвӗнче йышӑннӑ.

Колхозсенчи кашни выльӑха сыхласа хӑварар, выльӑхсен йышне малалла ӳстерсе пырар

ВКП(б) Обком секретарӗн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе ӗҫлекен заместителӗ Г. А. Мартынов юлташ ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XIX-мӗш пленумӗнче тунӑ докладран

Хӗрлӗ Ҫарпа ҫӗршыва татти-сыпписӗр выльӑх-чӗрлӗх продукцийӗ парса тӑрасси тата нимӗҫсен фашистла захватчикӗсенчен хӑтарнӑ районсене выльӑхсем парса пулӑшасси пысӑк та ответлӑ ӗҫ пулса тӑрать. Ҫак ӗҫе ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлас тесен, выльӑхсене пирӗн малалла та ӗрчетсе, йышлантарсах пымалла.

1943 ҫулта, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ытти ҫулсенчи пекех, пирӗн колхозниксемпе колхозницӑсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе аван ӗҫлерӗҫ. Пирӗн республикӑри колхозсем иртнӗ ҫулта государствӑн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли планне продукцилӗ выльӑхсем енӗпе ытлашшипех тултарчӗҫ.

Пирӗн республика ялхуҫалӑхӗнче тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре ҫитӗнӳсем тунӑшӑн, Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Совет Союзӗн правительстви пирӗн ӗҫе ҫакӑн пек пысӑк хисепе хуни пире колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхе ӗрчетес тӗлӗшпе татах та лайӑхрах ӗҫлеме хушать.

Вӑйлӑ тырпулшӑн тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессишӗн пыракан Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн ҫӗнӗ условийӗсем пысӑк ыйтусем кӑларса тӑратаҫҫӗ. Социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн малтанхи итогӗсене выльӑхсем хӗл каҫсан, июнӗн 1-мӗшӗ тӗлне, мӗнле тухнине шута илсе пӑхса тухмалла.

Ҫак вӑхӑтра уйрӑм районсем начар мар тӗслӗхсемпе кӗтсе илчӗҫ. Ҫӗрпӳ районӗнчи колхозсем мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем ӗрчетмелли плана 103,1 процент, сурӑхсем енӗпе — 109,6 процент, сыснасем енӗпе — 100,3 процент тултарчӗҫ. Ҫавӑн пекех чӑх-чӗпсем енӗпе те Ҫӗрпӳ районӗ плана тултарчӗ. Октябрьски районри колхозсем ҫак ҫулӑн 5 уйӑхӗнче сыснасен йышне 28,5 процент, сурӑхсен йышне 9,6 процент ӳстернӗ. Сӗнтӗр районӗнчи колхозсем лашасен йышне 5,5 процент, мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен йышне 10,8 процент, сурӑхсен йышне 39,1 процент ӳстернӗ. Тӑвай районӗнчи колхозсем сыснасен йышне 10,7 процент, Красноармейски районри колхозсем лашасен йышне 8,8 процент ӳстернӗ. Чурачӑк районӗ июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана пӗтӗмӗшпех тултарчӗ.

Анчах та хӑшпӗр районсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ ҫине тивӗҫлипе пӑхманнине пула выльӑхсен йышӗ республикӑра чылай чакрӗ. Сӑмахран, Элӗк районнех илер. Ҫав район общественнӑй выльӑх-чӗрлӗхе лайӑх ӗрчетнӗшӗн икӗ ҫул хушши Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Анчах юлашки вӑхӑтра Элӗк районӗн руководителӗсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ ҫине сӳрӗк пӑхма пуҫларӗҫ. Государствӑн мӑйракаллӑ выльӑхсем ӗрчетмелли планне район 78,6 процент, сыснасем енӗпе — 81,2 процент, сурӑхсем енӗпе — 79,8 процент кӑна тултарнӑ.

Вӑрнар районӗ ялхуҫалӑх ӗҫӗсемпе ялана малта пырать, анчах та выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе кунта ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак районри колхозсем государство планне мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем енӗпе 72 процент, сыснасем енӗпе — 41,7 процент, сурӑхсем енӗпе — 74 процент кӑна тултарнӑ.

Сӗнтӗрвӑрри, Шӑхасан, Вӑрмар, Ишлей, Шупашкар районӗсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе малти вырӑнта тӑратчӗҫ, кӑҫал вара вӗсем кая юлчӗҫ. Етӗрне районӗ те юлашки 5 уйӑх хушшинче питӗ каялла кайса ларчӗ. Ҫак ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа Етӗрне районӗнчи колхозсен фермисенче: мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем 493 пуҫ, сыснасем 448 пуҫ чакнӑ. Шӑмӑршӑ, Пӑрачкав, Кувакино, Чкаловски, Ҫӗмӗрле районӗсенче те выльӑхсен шучӗ нумай чакнӑ. Ҫӗмӗрле районӗнче 37 колхозран государствӑн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли планне мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем енӗпе 5 колхоз, сыснасем енӗпе — 1 колхоз, сурӑхсем енӗпе — 1 колхоз, кайӑк-кӗшӗк енӗпе — 3 колхоз кӑна тултарнӑ. Ҫак районра выльӑхсен шучӗ, уйрӑмах сыснасемпе сурӑхсем, нумай чакнӑ.

Государствӑн общественнӑй выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли планне кӑҫал республикӑри колхозсем ҫителӗксӗр тултарни, чӑн малтанах, ҫак ӗҫ ҫине Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ҫителӗксӗр пӑхнинчен, партин уйрӑм райкомӗсемпе райисполкомсем тата колхоз председателӗсем иртнӗ ҫулсенче тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса ларнинчен килнӗ.

Иртнӗ хӗлле выльӑх апачӗ енӗпе йывӑрлӑхсем пулни выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри ҫитменлӗхсене татах та пысӑклатрӗ. Анчах хӑшпӗр руководительсем выльӑхсен шучӗ чакнине тата уйрӑм колхозсенче фермӑсене пӗтернине пӗтӗмпех выльӑх апачӗ ҫукки ҫине йӑвантарма пӑхни пачах тӗрӗс мар тата ҫакӑ вӑл сиенлӗ те.

Государствӑн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли планне тултарманнин тӗп сӑлтавӗсенчен пӗри вӑл — ҫамрӑк выльӑхсене пӑхса ҫитӗнтерес ӗҫе япӑхлатни пулать. Ҫак ӗҫ ҫине нумай колхозсенче кирлӗ пек пӑхмаҫҫӗ-ха.

Чылай чухне выльӑх апатне нумай расходланӑ ҫӗртех выльӑхсем, вӗсене начар пӑхнӑ пирки, вилеҫҫӗ. Сӑмахран, Шупашкар районӗнчи «Кормилец» колхозра кӑҫал январь уйӑхӗнчен вара фермӑри выльӑхсене 49,5 центнер тӗштырӑ ситерсе янӑ, унта ҫӗрулми, силос, утӑ тата ытти апатсем те ҫителӗклӗ пулнӑ. Анчах, выльӑхсене ытла та начар пӑхнине пула, кунта выльӑхсем чылай вилнӗ. Ҫав вӑхӑтрах колхозниксен выльӑхӗсем лайӑх та самӑр. Ҫак тӗслӗх ВКП(б) райкомӗпе райисполком колхозсенчи выльӑхсене начар пӑхнипе пӗтерме тӑрӑшманни ҫинчен, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе куллен ертсе пыманни ҫинчен калать.

Колхозсенчи выльӑхсен шучӗ выльӑхсем вилнипе кӑна мар, вӗсене сутса салатса пӗтернипе те нумай чакать. Государствӑн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли планне тултарман пулин те 4 уйӑх хушшинче республикӑри колхозсен фермисенче выльӑхсене нумай салатса пӗтернӗ.

Хӑшпӗр ВКП(б) райкомӗсемпе райисполкомсем асӑрхаса тӑманнине пула, колхозсен уйрӑм руководителӗсем ҫамрӑк выльӑхсене кӑна мар, ҫитӗннӗ выльӑхсене те сутнисем нумай пулнӑ. Етӗрне районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра (председателӗ Попов юлташ) выльӑхсене ситерме апат ҫук тесе, район руководителӗсен куҫӗ умӗнчех 12 ӗне сутса янӑ тата фермӑна пӗтерме шут тытнӑ. Шупашкар районӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхозра 3 ӗнене пусса сутнӑ. Советски районри «Пучах» колхозра январь уйӑхӗнчен вара фермӑран 4 ӗне сутнӑ, 17 ӗнене какай валли пуснӑ, ҫапла вара фермӑра планпа пӑхнӑ 45 пуҫ вырӑнне пурӗ те 23 пуҫ кӑна юлнӑ.

Колхозсенчи общественнӑй выльӑхсене сутса салатассине халех чармалла. Колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗх фермисем Хӗрлӗ Ҫарпа ҫӗршыва апат-ҫимӗҫпе чӗртавар парса тӑракан паха ҫӑлкуҫӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ колхоз хуҫалӑхӗн паха отраслӗ пулса тӑрать. Ҫамрӑк выльӑхсене пурне те тӗрӗс-тӗкӗл пӑхса ҫитӗнтермелле, ҫапла кӑна эпир государствӑн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли планне ӑнӑҫлӑн тултарма пултаратпӑр.

АМА ВЫЛЬӐХСЕНЕ ПУРНЕ ТЕ ЧУПТАРСА ХӐВАРМАЛЛА

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре чуптару кампанине лайӑх ирттерни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Анчах та чылай районсенче уйрӑмӑнах Ишлей, Чкаловски, Кувакино, Шупашкар тата ытти районсенче ҫак ӗҫ тӳсме ҫук начар пырать.

Шупашкар районӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхозра июнӗн 1-мӗш тӗлне 24

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра).

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮНӖН 22-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Июнӗн 22-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ОНЕГА кӳллинчен ҫурҫӗртерехре ҫаплах наступлени туса пынӑ, тӑшмана ОСТЕР кӳлли патне КУМСА шывӗ хыҫне хӑваласа янӑ, халӑх пурӑнакан ВЕЛИКАЯ ГУБА ятлӑ пункта тата Мурманск чугун ҫулӗ ҫинчи ВАНЗОЗЕРО, МАЛЫГА, ЛУМБУШОЗЕРО ятлӑ чугун ҫул станцисене туртса илнӗ.

ОНЕГА кӳллипе ЛАДОГА кӳлли хушшинче пирӗн ҫарсем тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, Ленинград облаҫӗнчи ПОДПОРОЖЬЕ район центрне туртса илнӗ, ЛОДЕЙНОЕ ПОЛЕ районӗнче СВИРЬ шывӗн ҫурҫӗр хӗрринчи плацдарма аслӑлатассишӑн ӑнӑҫлӑ ҫапӑҫнӑ, НАЗАРЬЕВСКАЯ, СТАРАЯ ШВИРЬСКАЯ СЛОБОДА, НОВАЯ ШВИРЬСКАЯ СЛОБОДА ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктсене туртса илнӗ.

КАРЕЛИ перешеекӗнче пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере, ҫаплах наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ. Вӑл шутра — ЛАПИНЛАХТИ, РЕПОЛА, ЛЕХТОЛА ятлӑ ялсем тата ТАЛИ ятлӑ чугун ҫул станцийӗ.

Фронтӑн ытти участокӗнче улшӑнусем пулман.

Июнӗн 21-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 73 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Онега кӳллипе Ладога кӳлли хушшинче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем, татӑклӑн пырса ҫапса, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та Ленинград облаҫӗнчи Подпорожье район центрне тытса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче финн салтакӗсен виллисем нумай выртса юлнӑ. Тыткӑна илнисем пур. Трофейӑсем тытса илнӗ. Ӗнер Свирь шывӗн ҫурҫӗр енне каҫса кайнӑ пирӗн чаҫсем плацдарма аслӑлатассишӑн ӑнӑҫлӑ ҫапӑҫнӑ. Совет воинӗсем, татӑклӑ атака туса, финсене вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ позицисенчен сирпӗтсе кӑларнӑ та 3 ял туртса илнӗ. Пӗр чаҫри боецсем тӑшманӑн 450 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ, 7 тупӑ, 15 пулемет тата 2 боеприпас складӗ тытса илнӗ.

* * *

Карели перешеекӗнче пӗр соединени чаҫӗсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, темиҫе ял туртса илнӗ, 800 финн салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ.

Тумтирсемпе снаряженин икӗ пысӑк складне, ҫар хатӗрӗсем тиесе лартнӑ 40 вагон, 16 тупӑ, 30 пулемет тата боеприпассем нумай тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн пӗр часть тӑшмана ҫавӑрса илмелли ӑста маневр тунӑ-та унӑн ҫӗмӗрсе тӑкнӑ чаҫӗсен юлашкийӗсен каялла чакмалли ҫулӗсене татнӑ, 500 финна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Разведчиксен ушкӑнӗ, Брагин старши сержант командир пулса ертсе пынипе, тӑшман тылне кӗрсе кайнӑ, унта вӗсем финсен засадӑра тӑракан 5 танкне курнӑ. Ҫакӑн ҫинчен разведчиксем хамӑрӑн танковӑй подразделение пӗлтернӗ. Вара танкистсемпе пӗрле тӑшман танкӗсен экипажӗсене сасартӑк тапӑннӑ. Финсен танкисчӗсене пурне те вӗлерсе пӗтернӗ, 5 юсавлӑ танкне тытса илнӗ. Трофимов старши лейтенантӑн подразделенийӗнчи красноармеецсен ушкӑнӗ финн салтакӗсен подразделенине ҫавӑрса илсе пӗтерсе тӑкнӑ, 3 танк тата шултӑра калибрлӑ темиҫе пулемет тытса илнӗ.

Пирӗн авиаци пӗр ҫӗре пухӑнса тӑнӑ финн ҫарӗсене пыра-пыра ҫапнӑ, ҫарсемпе вӑрҫӑ хатӗрӗсем турттарса пынӑ 70 автомашинӑпа 30 лава пӗтерсе тӑкнӑ. Совет бомбардировщикӗсемпе штурмовикӗсем узловой чугун ҫул станцийӗсене вӑйлӑн пыра-пыра ҫапса, 350 вагонпа платформа ытла ҫӗмӗрсе тӑкнӑ е ҫунтарса янӑ. Летчик-истребительсем сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсемпе финсен 15 самолетне персе ӳкернӗ. Совет Союз Геройӗ Лихолетов капитан икӗ кун хушшинче тӑшманӑн 4 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ.

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флотӗн авиацийӗ Выборг заливӗнче тӑшман карапӗсене атакӑланӑ. 1.000 тонна таякан суднӑна, хӑварт ҫӳрекен 4 десант баржине тата хуралта ҫӳрекен катера шыва путарнӑ, темиҫе карапа баржӑна сиенленӗ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 7 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Витебск хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре тул ҫутӑлса килнӗ чухне тӑшман пехоти ҫапӑҫса разведка тума хӑтланнӑ. Боевой охраненире тӑракан гварди старши сержанчӗн Еременкӑн стрелковӑй отделенийӗ тӑшмана пулеметсемпе тата автоматсемпе пеме тытӑннӑ. Гварди рядовойӗ Малышев граната вӑркӑнтарнӑ та 9 гитлеровеца вӗлернӗ. Тӑшман, пирӗн боецсенчен нумай йышлӑрах пулнӑ пулин те, ситӗнӳ тӑвайман, унӑн ирӗксӗрех каялла чакмалла пулнӑ, пирӗн траншея умӗнче гитлеровецсен салтакӗсемпе офицерӗсен 25 вилли выртса юлнӑ. Боровой старши лейтенантӑн подразделенийӗнчи снайперсем 10 кун хушшинче 50 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Снайпер Поддубный 11 нимӗҫе, снайпер Караулов — 11, снайпер Липатов — 10 нимӗҫе вӗлернӗ.

* * *

Барановичи облаҫӗнче кӗрешекен партизансен темиҫе отрячӗ май уйӑхӗнче нимӗҫсен 27 ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ, 1.000 рельса ытла сирпӗнтерсе янӑ. 25 паровоз, ҫарсем турттарса пынӑ 52 вагон тата тӗрлӗрен ҫар хатӗрӗсем турттарса пынӑ 120 вагонпа платформа ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. Партизансем шоссе ҫулӗсем ҫинчи 10 кӗпере сирпӗнтерсе янӑ, телеграфпа телефон ҫыхӑнӑвӗн линине 19 километр тӑршшӗ татса илнӗ. Нимӗҫ захватчикӗсемпе ҫапӑҫса, партизансем 800 гитлеровеца вӗлернӗ, 700 гитлеровеца ытла амантнӑ.

* * *

Тыткӑна илнӗ румын офицерӗсем ҫапла каласа кӑтартнӑ: нимӗҫсем Румынин государство аппарачӗпе Румыни ҫарӗн управленине пӗтӗмӗшпех хӑйсен аллине ҫавӑрса илнӗ. Румынире гитлеровецсем ним вӑтанмасӑр мӑшкӑлла-мӑшкӑллах оккупациленӗ. Румынсен 87-мӗш бомбардировочнӑй эскадрильин тыткӑна лекнӗ командирӗ капитан Флориан Сучевяну ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Румынире нимӗҫсем пӗр хӑйсем кӑна хуҫа пулса тӑраҫҫӗ. Пур штабсенче те кӗҫӗннисенчен пуҫласа аслисене ҫитиччен нимӗҫсем лараҫҫӗ. Тӗрӗссипе каласан, Румыни чаҫӗсен чӑн-чӑн командирӗсем — нимӗҫсем. Румынсен командованине ҫынна кӑтартма кӑна тытса тӑраҫҫӗ. Мӗн пата советник шучӗпе нимӗҫ лейтенантне ячӗҫ. Ӑна тем тума та ирӗк панӑ. Вара ҫав нимӗҫ эскадрилья хуҫи пулса тӑчӗ. Вӑл лейтенант кӑна, эпӗ—капитан. Апла пулин те мана пур енчен те ӑна пӑхӑнса тӑма хушрӗҫ. Вӑл пур ӗҫе те хутшӑнатчӗ, манӑн приказсене нимӗнсӗрех улӑштаратчӗ. Пӗтӗм Румыни ҫарӗнче ӗҫ халӗ эпӗ каланӑ пек пулса пырать. Нимӗҫсем влаҫа хӑйсен аллине ҫавӑрса илчӗҫ те румын офицерӗсене тискеррӗн тыткалаҫҫӗ».

Румынсен 3-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи пӗр ротӑн Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ командирӗ капитан Ион Б. ҫапла каласа кӑтартнӑ. «Дивизири пур подразделенисене те нимӗҫ инструкторӗсемпе контролерӗсене ячӗҫ. Ман ротӑна нимӗҫ фельдфебельне пачӗҫ. Вӑл чӑн-чӑнах ӗнтӗ гестапо шпикӗ пек. Вӑл кашни ирхинех ротӑна пыратчӗ те офицерсемпе салтаксем мӗн калаҫнине пӗлме тӑрӑшатчӗ. Ҫак фельдфебель хӑй сӑмсине пырса чикмен вырӑн юлмарӗ, офицерсен кашни утӑмне асӑрхаса тӑратчӗ, офицерсене замечанисем тӑватчӗ. Эпир ҫак ирсӗр нимӗҫе питӗ тарӑхса ситрӗмӗр. Офицерсем ун пирки мана ӳпкелешсе каласа кӑтартатчӗҫ, анчах та эпӗ ӑна нимӗн те тума пултарайман, унта манӑн ирӗк пулман».

М. А. МАРТЫНОВ юлташ доклачĕн вĕçĕ

[illegible]

ЛАШАСЕМ ĔРЧЕТЕС ТĔЛĔШПЕ ПИКЕНЕРЕХ ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

Отечественнăй вăрă çулĕсенче [illegible]

[illegible]

ВАК-ТĔВЕК ВЫЛЬĂХСЕМ ĔРЧЕТЕССИ

[illegible]

ВЫЛЬĂХСЕМ АПАЧĔН БАЗИНЕ ÇИРĔПЛЕТЕС

[illegible]

ВЫЛЬĂХСЕМ ВАЛЛИ ÇУРТСЕР ÇИТЕЛĔКНЕ ПУЛМАЛЛА

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1943 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче [illegible]

[illegible]

выльăх апачĕ те ытларах пĕтет, выльăхсем час-часах чирлеççĕ, ырханланаççĕ, вĕсен продуктивноçĕ чакать, хăш чухне вара вĕсем çак сăлтавсемпех вилеççĕ те.

Анчах та хăшпĕр колхозсенче выльăхсен çуртĕрĕсене юсасси çине çиелтен пăхаççĕ. Ишлей районĕнчи «Çĕньял» колхозра иртнĕ çул хĕле кĕрес умĕн выльăх çурчĕсене кирлĕ пек юсайман. Витесенче сивĕ, тасамар пулнă. Тахçанхи тислĕксене те тасатман пулнă. Çапла вара çамрăк выльăхсене ниçта усрама та май пулман. Çавăн пирки ку колхозра иртнĕ хĕлле выльăхсем чылай вилнĕ. Ветеринари работникĕсем сăнаса тĕпченĕ тăрăх, 11 пуç ĕне, шăкса пăсăлнипе, ӳпке шыçнă пирки вилнĕ.

Партипе совет тата çĕрĕç органĕсен выльăх-чĕрлĕх çуртĕрĕсене юсас ĕçе колхозниксене халăх мобилизацилемелле. Ку ĕçсене тырпул вырма тытăниччен тумалла. Выльăх çуртĕрĕсене юсама фермăсенче ĕçлекенсемпе колхозниксенчен ятарласа бригадăсем тумалла. Вĕсен, витесене тата ытти çуртĕрсене те ăста мĕн юсамаллине пăхса тухса, пĕр чăрмавсăр тăмасăрах ĕçе тытăнмалла.

Фермăсем çывăхĕнче тымар-çимĕçсем, çĕрулми хумалли нӳхрепсем, арпа, утă çăнăхĕсем хумалли типĕ хуралтăсем, утă семпе улăмсене купаламалли — урасем туса хатĕрлемелле. Силос шăтăкĕсемпе траншейăсене çивитлĕ тумалла, çапла туни вăл кĕлшехи вăхăтра силоса пĕрехетлĕн тыткаламалла тата унăн пахалăхне упрама пулăшать.

Кашни колхозрах выльăхсен çуртĕрĕсем çывăхĕнче парасасем, сăлкуçĕсем пулмалла.

ВЕТЕРИНАРИ ĔÇĔСЕМ

Юлашки çулсенче республикăри колхозсенче выльăх чирĕсем сахалли сисĕнет. Канаш, Сĕнтĕр, Шăхасан, Шупашкар Чкаловски тата Комсомольски районсенчи хăшпĕр колхозсенче çак вăхăта çитсе те кăрчанкăпа чирленĕ лашасем пур. Çав районсенчи колхозсенче сывă лашасене чирлисенчен уйăрмаççĕ, кăрчанка хирĕç кирлĕ пек кĕрешмеççĕ.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсем выльăхсен ерекен чирĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе çине тăрса организацилеме тивĕçлĕ. Ерекен чирсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе пур мероприятисене те туса ирттермелле. Çав чирсен хăрушлăхĕ çинчен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса памалла, чир-чĕрсене хирĕç кĕрешес ĕçе колхозниксен анлă йышне явăстармалла. Лаша тата урăх выльăх витисене тислĕкрен тасатсах тăмалла, кĕл шывĕпе çумалла, шурă тăмпа шуратмалла, выльăх картисене пурне те тасатсах тăрас пулать.

Май уйăхĕн вĕçĕнче ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Выльăх-чĕрлĕхсене ерекен чирсенчен сыхласси тата çав чирсемпе кĕрешесси çинчен» ятарласа решени йышăнчĕ. Пирĕн республикăн правительстви ерекен чирсене хирĕç кĕрешмелли мероприятисен планне çирĕплетрĕ. Çак мероприятисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла.

* * *

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе кадрсем татса параççĕ. Элĕк районĕ, иртнĕ çул выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçлесе, республикăра пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Анчах та çитĕнӳпе ăнланса ларса выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çине кунта çиелтен пăхма тытăннă. Кăçал унта фермăсен заведующийĕсене 70 çынна кĕске вăхăтлăх курсран вĕрентсе кăлармалла пулнă, анчах та 23 çынна кăна вĕрентсе кăларнă, 15 ветсанитар хатĕрлес вырăнне пĕр çынна та вĕрентмен. Старши конюхсене, дояркăсене пуxса калаçман, вĕрентмен. Вĕсем хушшинче массăллă-ăнлантарулă ĕçе йĕркелемен. Опытлă конюхсене, ферма заведующийĕсене тата выльăх-чĕрлĕх ĕçĕнче ĕçлекен ытти работниксене урăх ĕçсене куçарса янă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсене ытти хăшпĕр районсенче те час-часах улăштараççĕ е урăх ĕçсене яраççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсене кулленех пулăшса пымалла, вĕрентмелле. Вĕсене сăлтавсăрах улăштарассине е урăх ĕçе куçарассине пачах пĕтермелле.

ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен ялхуçалăх специалисчĕсене ĕçлеме кирлĕ пек условисем туса парас пулать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине малалла вăйлатса пырасси — ответлă та пысăк ĕç. Государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне кашни колхозрах тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Выльăхсем валли çителĕклĕ таран апат-çимĕç хатĕрлессишĕн, выльăх витисене вăхăтра юсассишĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарассишĕн, çапла вара фронтпа çĕршыва — сĕт-çу, аш-какай, промышленноçа—чĕртавар ытларах та ытларах парассишĕн социализмлă ăмăртăва татах та анлăрах сарса ярар!

Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçи виçĕ çул тултарни çинчен Англири хаçатсемпе радио мĕн калаççĕ

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Ивнинг стандарт» хаçат Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçи виçĕ çул тултарни çинчен çырнă умстатьинче çапла калать: «Механикăлла вăй туса хума пултарнă чи йывăр условисенче Совет государстви хăй вăйлă та тĕреклĕ пулнине кăтартрĕ, вăл вăрçăсен пĕтĕм историйĕнче мĕнле те пулин государство тӳснĕ йывăрлăхсемпе асапсенчен те пысăкрах йывăрлăхсемпе асапсем тӳссе ирттерме пултарчĕ». Вырăссем Бородинори çапăçура, шухăш-кăмăл енчен илсен, çĕнтерни çинчен Л. Н. Толстой каланине илсе пичетлесе, хаçат çапла çырать: хальхи вăхăтри вырăссем, Бородинори пек темиçе иин çапăçура пулнăскерсем, хăйсен хăвачĕн çăлкуçĕпе пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтереççĕ.

Радио комментатор Патрик Лейси Лондонри радиопа çапла каланă: Германин хăй Российйăна кĕрсе кайни виçĕ çул тултарнă кун шухăшламалли пур. 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче Российйăна кĕрсе кайни Гитлерăн чи ухмах ĕçĕсенчен те ухмараххи пулнă. Российйăна тапăннă кун Гитлер хăйĕн походне историри чи вăйлă поход тесе ят пачĕ. Халĕ ĕнтĕ ăна историре чи хытă каялла чакни теме пулать. Совет Союзĕ çак вăрçăра çав тери пысăк вăй хурса кĕрешни çинчен, Совет Союзĕ тӳснĕ çухатусем çинчен калаçса, обозреватель çапла пĕлтернĕ: çак сăмах пĕрре те ытлашши пулмасть: вырăссем иртнĕ виçĕ çул хушшинче çав тери хастарлăн çапăçман пулсан тата халь вĕсем çав тери паттăррăн çапăçман пулсан, Хĕвеланăçĕнче Европăна ăнăçлăн пырса кĕме май пулман пулĕччĕ.

ФИНЛЯНДИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ПАРАКАН ДЕКРЕТ КĂЛАРНИ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Финлянди радиовĕ паян çапла пĕлтернĕ: Финлянди сеймĕ июнĕн 20-мĕшĕнче правительствăна «чрезвычайнăй полномочисем» парасси çинчен декрет кăларнă.

ФИНЛЯНДИ СЕЙМНЕ ХЕЛЬСИНКИРЕ МАР, ЫТТИ ÇĔРТЕ ПУХАССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОН

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: «Ĕнер Финлянди сеймĕ чрезвычайнăй условисем сиксе тухсан сейма Хельсинкире мар, ытти çĕрте пухма ирĕк паракан закона çирĕплетнĕ».

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсем июнĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле хĕвеланăç Германие тапăннă. Июнĕн 22-мĕшĕнче ирхине «Москито» йышши самолетсен пысăк соединенийĕсем Берлина тапăнни çинчен пĕлтернĕ.

Англин авиаци министерстви çапла пĕлтернĕ: июнĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Рурпа Рейн облаçĕсенчи промышленность объекчĕсене çав тери вăйлă тапăннă. Çав операцисенчен тата «Москито» самолетсем Берлина тапăннă хыççăн хăйсен базисене 46 бомбардировщик таврăнман.

АНГЛИ ГЕРМАНИН САМОЛЕТ-СНАРЯЧĔСЕМ ÇИНЧЕН ОФИЦИАЛЬНĂЙ ЙĔРКЕПЕ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официально çапла пĕлтернĕ: Германин çĕнĕ самолет-снарячĕсем ракетăллă двигательпе ĕçлеççĕ. Çавăн пекех самолет-снарядсем ятарласа тунă платформа çинчен вĕçсе хăпараççĕ. Вĕсем 150 мильăна яхăн вĕçеççĕ, сехетре 300—350 миля каяççĕ. Вĕсен сирпĕнтерекен вăйĕ Германин пĕр тонна таякан бомбин сирпĕнтерекен вăйĕ чухлĕ.

Иртнĕ çулталăк вĕçĕнчен пуçласа, Германин самолет-снарячĕсен базисем çине, официальнăй хыпарсем тăрăх, темиçе вунă пин тонна бомба пăрахнă. Самолетсем çинчен ӳкерсе илсе, çакна палăртнă: çав базăсене питĕ вăйлă сиенленĕ, çапла вара нимĕçсене çав çĕнĕ йышши хĕçпăшалпа усă курса Англие массăллăн тапăнма кансĕрленĕ.

Англин авиаци министерстви пĕлтернинче çапла каланă: Ла-Маншăн Франци çыранĕ çинчен вĕçсе хăпарса Англи хулисене тапăнма шутласа хунă тăшман планĕсене арпаштарса яма кирлĕ мерăсем йышăннă, тенĕ.

Люцерна çулаççĕ

ШĂХАСАН, июнĕн 19-мĕшĕ. Матьшӳри «Молодой колхозник» колхоз ĕнер 18 гектар çинчи люцернăна çулса пуçтарчĕ. Колхоз кăçал люцернăна икĕ хут çулса илме шутлать.

В. ВЕСЕЛОВ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн июнĕн 21-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Шербур хулине тытса илессишĕн пыракан çапăçура союзниксен çарĕсем çĕнĕ çитĕнӳсем тунă, нимĕçсем хăйсен аллинче тытса тăракан район пĕчĕкленнĕçемĕн пĕчĕкленсе пырать. Пирĕн çарсем пĕтĕм çурутравĕпех хăвăрт малалла куçса пынă. Хĕвелтухăç енче эпир Валонь хулинчен çурçĕртерехри магистралĕн икĕ енĕпе те малалла куçса пынă. Хĕвеланăç енче анлă участокра малалла куçса пырса, эпир халь тинĕсрен 5 мильăра çеç тăратпăр, Тертевилль, Аг тата Аквилль ялĕсене тытса илтĕмĕр. Тилли-сюр-Сель—Кан районĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ, унта фронт, пĕтĕмĕшпе илсен, улшăнман. Ытти секторсенче патрульсем кĕрешнĕ. Çапăçусем пыракан районра çумăр пĕлĕчĕсем хупăрласа илнĕ пирки июнĕн 21-мĕшĕнче ирхине авиаци вăйлă кĕрешеймен. Вăтам тата çăмăл бомбардировщиксем Калепе Амьен хушшинчи районра самолет-снарядсем вĕçсе хăпаракан 5 базăна тапăннă».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Союзниксем Шербур çине питĕ ăнăçлă наступлени туса пыраççĕ. Пĕтĕм фрончĕпех икĕ мильăран пуçласа виçĕ миля таран малалла куçнă. Сылтăм флангра союзниксен çарĕсем Ле-Тейл ялĕ çывăхĕнче Сэр шывĕ патне çитнĕ. Сулахай флангра вĕсем Сент-Круа-Ла-Аг çывăхĕнче тинĕсрен виçĕ мильăра выртакан вырăна çитнĕ. Вăтаçĕрте, Валоньпе Шербур хушшинчи чугун çул тăрăх пырса, пысăк çитĕнӳсем тунă. Тилли-сюр-Сель секторĕнче тăшман артиллерипе миномётсенчен калама çук вăйлă персе тăнă. Ытти секторсенче патрульсем кĕрешнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшман объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

Истребитель-бомбардировщиксем Париж-ран хĕвеланăçнелле каякан чугун çулсене ăнăçлăн атакăланă».

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çар министрĕ Григг общинăсен палатинче çапла каланă: союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕ Эйзенхауэр генерал хăйĕн штабне Францире оккупантсене хирĕç кĕрешекен организацисемпе çыхăнтарма кирлĕ мерăсем йышăннă.

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн июнĕн 22-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Хальхи вăхăтра Шербур хулине пĕтĕмпе тенĕ пекех çавăрса илнĕ. Союзниксен çарĕсем Шербур портĕнчен Сен-Пьер Эглиз хули патне пыракан çула татнă, çав хулана ирĕке кăларнă. Фронтăн ытти секторĕсенче нимĕнле пахалă улшăну та пулман.

Çанталăк лайăхланнине пула, союзниксен темиçе çĕр истребителĕ (вĕсенчен нумайĕшĕ çинче ракетăллă снарядсемпе бомбăсем пулнă) тул çутăлса килнĕ вăхăтран пуçласа кăнтăрлаччен Çурçĕрхĕвеланăç Францийĕнче кĕрешнĕ, тăшмана Париж районĕнчен çĕнĕ вăйсем илсе пыма кансĕрленĕ. Авиаци, çĕр çинчи вăйсене пулăшса пырса, тăшманăн Шербурти çирĕплетнĕ позицийĕсем çине бомбăсем пăрахнă тата вĕсене тупăсемпе, пулеметсемпе пенĕ. Кăнтăрлахи йывăр бомбардировщиксем Ла-Манш çыранĕнче самолет-снарядсем вĕçсе хăпаракан базăсене тапăннă».

Эйзенхауэр Шербур халăхне чĕнсе калани

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕ Эйзенхауэр Шербурти француз халăхне чĕнсе каланă. Вăл Шербурти доксемпе чугун çулсем çинче ĕçлекен çынсене хăйсем ĕçлекен вырăн патнерех тăма ыйтнă. Предприятисен хуçисен, заводсенче, доксенче тата чугун çулсем çинче ĕçлекен рабочисен нимĕçсене промышленность оборудованине, паровозсене, сигналсене, автотранспорта, куçса çӳремелли хатĕрсене тата пушарпа кĕрешмелли оборудование çĕмĕрме памалла мар. Кашни çынăн Шербура ирĕке кăларнă хыççăн союзниксем усă курма пултаракан материалсене сыхласа хăварма мĕн вăй çитнĕ таран тăрăшмалла, тенĕ.

Союзниксен çарĕсем Германин самолет-снарячĕсен базисене тытса илни

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Британин радио саракан корпорацийĕ çапла пĕлтерет: Америкăн Котантен çурутравĕ тăрăх куçса пыракан çарĕсем нимĕçсен самолет-снарядсем вĕçсе хăпаракан темиçе базине тытса илнĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: вăйлă çумăрсем союзниксен çарĕсене Италире малалла куçма кансĕрлесе тăнă. Çапах та Адриатика тинĕç хĕрринчи секторта союзниксен чаçĕсем Тронто шывĕ урлă каçнă. Хальхи вăхăтра вĕсем Ази шывĕ патне çитнĕ. Саккăрмĕш армин чаçĕсем Перуджа хулине кĕрсе кайнă. Тăшман хирĕç тăрать пулин те, союзниксен çарĕсем хулан икĕ айккипе те пăртак малалла куçнă. Перуджа хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Тразимен кӳллин тата унтан кăнтăр-хĕвеланăçнерехре выртакан Киузи кӳллин кăнтăр енчи çыранне çитнĕ. Пиллĕкмĕш армин чаçĕсем Гроссето хулинчен çурçĕрелле куçса пыраççĕ. Халĕ вĕсем Больсен кӳллинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри Монте Амиато ятлă пункта çитнĕ.

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: саккăрмĕш армин чаçĕсем, çурçĕрелле куçса пырса, Перуджа хулинчен 9 миля хĕвелтухăçнерехре ларакан Бастиа хулине туртса илнĕ тата çав районрах Кьящо шывĕ урлă каçнă.

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: вăйлă çумăр çунă пирки Италире союзниксен çарĕсем çулсемпе çеç куçса пыма пултарнă. Перуджа хулинче тăшман хирĕç тăнине çĕнтернĕ, акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем çав хуларан 5—6 километр çурçĕрелле куçнă. Адриатика тинĕсĕн хĕвелтухăç çыранĕнче союзниксен патрулĕсем Менмоккьо шывĕ патне çитнĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕн фронтĕнче пăру-тăру улшăнман.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италипе Албанири суднисене тата ытти об'екчĕсене темиçе хут та тапăннă.

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: çанталăк лайăхланчĕ, анчах та пылчăк союзниксен çарĕсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна йышлăн куçарма кансĕрленĕ. Фронтăн Адриатика участокĕнче союзниксен çарĕсен малта пыракан отрячĕсем Фермо патне çитнĕ. Фолиньо хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Англин 8-мĕш армийĕн çарĕсем хальхи вăхăтра Камерино тата Ночера Умбра хулисем патне çывăхарса пыраççĕ. Перуджа хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата Тразимен кӳлли çывăхĕнче союзниксен çарĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтерсе, пăртак малалла куçнă. 1-мĕшпе 73-мĕш номерлĕ шоссе çулĕсем çинче Америкăн 5-мĕш армийĕн чаçĕсем хальхи вăхăтра Гроссето хулинчен 25 километр çурçĕртерехре тăраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ Çурçĕр Италири чугун çул кĕперĕсем çине, тăшманăн Ливорно портĕнче тăракан суднисем çине, çавăн пекех тата унăн Италири ытти объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ИТАЛИ ПАТРИОЧĔСЕМ ГЕНУЯ ХУЛИН ФАШИСТЛА КОМЕНДАНТНЕ ВĔЛЕРНĔ

ЖЕНЕВА, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла Трансоциан агентстви çакăн пек пĕлтернĕ: июнĕн 20-мĕшĕнче каçхине нимĕçсем оккупациленĕ Генуя хулинче фашистсене хирĕç кĕрешекен итальянецсем Генуя хулин çар комендантне—Сильвио Пароди генерала вĕлернĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: доверенная врач (ĕç укçи 800 тенкĕ), оргинструктор тата çар сыннисен членĕсене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор. Условисем çинчен пĕлме тата ĕçе кĕме заявлени пама çак адреспа пымалла: гор. Чебоксары, Набережная реки Кайбулки, 21. Ĕçлеме илнисене хваттер параççĕ.

Чувашпромстрахкасса.

Чăвашстрахкассăна Шупашкарта ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: главнăй бухгалтер, агроном, техник-строитель, экономист-статистик, инспекторсем, ревизорсем тата секретарь-машинистка.

Районсенче ĕçлеме практикант-инспекторсем тата бухгалтерсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 10, Чувашстрахкасса. 2—1

Шупашкарти «Красный мебельщик» артель юсама сĕтел-пукансем тата çĕленĕ япаласем йышăнать. Материал — заказчиксен.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ворошилова, 24. Тел. 5—01. 2—1.

«Торгплодоовощь» трестне ялан ĕçлеме главнăй бухгалтерăн заместителĕ, финанс пайĕн начальникĕ, бухгалтер-ревизор, транспорт инспекторĕ тата товаровед кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Свердлова, 35. Отдел кадров. 2—1

Шупашкарти пир-авăр техникумĕ кăнтăрлахи отделенипе каçхи отделение ĕçрен татăлмасăр вĕренме илесси çинчен пĕлтерет:

Техникумра 4 çул вĕренмелле.

Техникум çакăн пек специалистсене вĕрентсе хатĕрлет: 1) çĕрмамăкĕ арлас тĕлĕшпе ĕçлекен техник-технологсене тата 2) çĕрмамăкĕнчен пир-авăр тĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен техник-технологсене.

Техникума 14 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ çынсене илеççĕ, каçхи отделение унтан аслăраххисене те илеççĕ. Вĕренме кĕрекенсен вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлмелле.

Вĕренме кĕрекенсен çак предметсемпе испытани тытмалла: 1) вырăс чĕлхипе тата литературăпа, 2) математикăпа, 3) СССР Конституцийĕпе.

Туллимар вăтам шкултан 1943—44 çулсенче «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе тухнисене 1-мĕш курса испытанисĕрех илеççĕ.

Вăтам шкулăн 9-мĕшпе 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене 2-мĕш курса испытанисĕрех илеççĕ.

Техникумăн каçхи отделенийĕн 3-мĕш курсне вăтам шкулăн 10-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене тата техникумсен 3-мĕш курсĕнче вĕренекен студентсене илеççĕ.

Заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Вĕренме кĕмелли испытанисем августăн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, 2) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, 3) автобиографи, 4) виçĕ фотокарточка, 5) сывлăх çинчен калакан справка.

Паспортсене кашни хăй кăтартать.

Техникумра сентябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Студентсене стипенди, рабочисемпе пĕр пек снабжени параççĕ тата столовăйра апатлантараççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Новая, 22 (Женская школа № 2).

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

Июнĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех «МАСКАРАД» тата «МЕДВЕДЬ» ятлă саслă, илемлĕ фильмсем кăтартать. Вĕсене А. П. Чехов произведенийĕсем тăрăх ӳкерсе хатĕрленĕ.

Сеанссем умĕн А. П. Чехов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен лекци пулать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсене ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ агрономипе зоотехника факультечĕсен 1-мĕш курсне вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Института вăтам шкултан вĕренсе тухнă çынсене — физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе тата литературăпа испытани лайăх тытнисене илеççĕ. 1943—44-мĕш çулсенче вăтам шкултан отличник пулса вĕренсе тухнисене института испытанисĕрех илеççĕ.

Заявленисене сентябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Вĕренме кĕмелли испытанисем сентябрĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: мĕн чухлĕ вĕреннине кăтартакан свидетельство тата автобиографи.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Волгостроя, 4, Сельхозинститут, в приемную комиссию. 3—1.

Чувашпотребсоюза васкавлăн çакăн пек работниксем кирлĕ: оргтодел инструкторĕсем, кадрсен отделĕн инструкорĕсем, финанс, план тата суту-илӳ отделĕсенче ĕçлекен работниксем. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Театральная, 1/5, Чувашпотребсоюз, Отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00211 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.